Канаш.

9(с116)К633
А-23
239-к

*Агитаторсем валли*

ЛЕОНИД АГАКОВ

# ТӐВАТӐ ҪУЛ ЮППИНЧЕ

*Очерк*

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1947

Национальная библиотека ЧР
k-000239

К63.3
А23

*Агитаторсем валли*

ЛЕОНИД АГАКОВ

# ТӐВАТӐ ҪУЛ ЮППИНЧЕ

(Канаш хули)

*Очерк*

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1947

239-К

Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

2010 2 МАЙ 2017

Редактор *Я. Ухсай.* Тех. редактор *М. Тимофеева.*

НТ 01001. Подписано к печати 2./XII—1947 г. Объем 1,25 печ. л.
Заказ № 1043. Тираж 5.000 экз

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности
при Совете Министров Чуваш. АССР

Гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5.

*Пуш-пушах тенĕ пек вырăнсенче çĕнĕ пысăк хуласем ӳссе ларчĕç.*

*И. Сталин.*

# 1. Кунта сĕм вăрман пулнă...

Кунĕн-çĕрĕн, хĕлĕн-çăвĕн пĕр чарăнмасăр чупаççĕ поездсем...

Мускавран Свердловска, Хусантан Харькова, Шупашкартан Горькине, Свердловскран Мускава, Харьковран Хусана, Горькирен Шупашкара ыткăнаççĕ вĕсем. Темĕн чухлĕ ĕçлекен халăх, темĕн тĕрлĕ груз турттараççĕ, аслă Çĕршывăн пĕр кĕтессине теприппе çыхăнтарса тăраççĕ. Çĕрĕн-кунĕн, çăвĕн-хĕлĕн...

Анчах çав вутпа сывлакан, çĕр чĕтретсе чупакан, тепĕр чух çĕршер вагон çаклатнă хурçă урхамахсем пĕри те Канаш станцинче чарăнмасăр иртмеççĕ. Канашра вĕсем пушанаççĕ, тиенеççĕ, топливăпа шыв илеççĕ, хăшĕсем бригадăсене улăштараççĕ, çĕнĕ вагонсем çаклатаççĕ те—каллех малалла, хăйсене çитме хушнă çĕрелле вĕçтереççĕ.

Канаш—Мускавпа Хусан хушшинчи чугун çул çинчи питех те паллă станци, пысăк узел пулса тăрать. Кунпа пĕрлех, Канаш—пирĕн республикăри чи пысăк промышленноçлă тата культурăллă центрсенчен пĕри, вăтăр пин çын ытла пурăнакан хула. Анчах вăл питех те çамрăк, Октябрьти социализмлă Аслă революци хыççăн, пуринчен ытла сталинла пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче ӳссе çитĕннĕ хула.

...Унăн кĕске историйĕ çакăн пек.

Пĕр аллă çул каялла хальхи Канаш хули, ун çумĕнчи вагонсем юсакан завод вырăнĕнче таккишпех сĕм вăрман кашласа ларнă. Вăл вăрманта пурте пулнă: упикашкăрĕ те, мулкачи-тилли те, тĕрлĕ вĕçен кайăкĕ те. Анчах этем пулман унта. Çынсем çав вăрман çумне йăпшăнса ларнă пысăках мар мĕскĕн ялсенче пурăннă. Мĕнле пурăннă? Хыткан çĕре сухапуçĕпе чĕркелесе, теçеттинран 30—40 пăт тырă тукаласа, раштав хыççăн çиме çуккипе аптăраса... Кулаксем кăна—кашни ялта

темиҫе кил—турра ӳпкелешмен; вӗсем чухӑнсен юлашки сӗткенӗсене пӑчӑртаса кӑларса, пуйнӑҫемӗн пуйса пынӑ, ҫӗр ҫинчи пур ырлӑхсемпе те усӑ курнӑ.

Вунтӑххӑрмӗш ӗмӗр вӗҫӗнче, Россиӑра промышленноҫлӑ капитализм вӑйлӑн аталанма пуҫласан, чугун ҫулсем тӑвас ӗҫ анлӑн сарӑлса кайнӑ. Пӗр вунӑ ҫул хушшинчех (1890—1900 ҫулсенче) Россиӑра 21 пин ҫухрӑм тӑршшӗ чугун ҫулсем тунӑ. Шӑп та ӗнтӗ ҫавӑн чухне Мускавпа Хусан хушшинчи чугун ҫула хывнӑ. 1891 ҫулта вара хальхи Канаш станцийӗ тӗлне ҫитнӗ те вӑрманта пӗчӗк ҫеҫ ҫурт туса лартнӑ.

Станцие—ҫул ҫинчи ытти пур станцисемпе разъездсем пекех—ят памалла пулнӑ. Нумай шухӑшласа тӑмасӑрах, ӑна станцирен пӗр ҫухрӑм ҫурӑра ларакан Шӑхран ялӗн ятне панӑ. Ҫакӑнтан вара Шӑхран станцийӗ пуҫланса кайнӑ...

Чугун ҫул ӗҫлеме тытӑнсанах, ку таврара тӗрлӗрен промысласем, суту-илӳ аталанма пуҫлать. Станци таврашӗнче, пӗрин хыҫҫӑн тепри, таврари ялсенчи пуянсем йӑва ҫавӑрма тапратнӑ. Канашра нумайранпа пурӑнакан ҫынсем халь те лайӑх астӑваҫҫӗ: чӑн малтан кунта ҫывӑхри Вырӑс Пикшикрен пынӑ кашинскисемпе курбатовсем, Ахпӳртрен пынӑ игнатьевсем—ҫӗрме-пуянсем пысӑк ҫуртсем тӑва-тӑва лартнӑ. Вӗсем тырӑпа, вӑрманпа, ҫу-ҫӑмартапа сутӑ тума тытӑннӑ, чӑпта ҫаптарнӑ, темӗн те пӗр. Вӗсен кунта таварсене хумалли складсем ӳсе-ӳсе ларнӑ, таврари хресченсене ҫав тери йӳнӗ те ултавлӑ хакпа ӗҫлеттерсе, тырпула авӑртса ҫӑнӑх тума пӑспа ӗҫлекен чылай пысӑк армансем лартса хутанӑ.

Ҫук пурнӑҫпа, выҫӑпа аптраса ҫитнӗ хресченсем вӗсемшӗн кунне темиҫе пусшӑнах ирӗн-каҫӑн тар юхтарса, ҫав ҫӗнӗрен шӑтса тухнӑ промышленниксемпе купецсене тӑтӑшах пуйтарса пынӑ...

Нумайӑшӗ вӗсем патне хӑйсен лашисемпех ӗҫлеме пынӑ, вӑрман显 каснӑ, йывӑҫ турттарнӑ. Хашӗсем лавҫӑ ӗҫӗпе пурӑнма пикеннӗ, килӗсене пӑрахса—ҫемьисемпех Шӑхрана куҫа-куҫа килнӗ.

Ун пеккисем ҫинчен ҫавӑн чухнехи вырӑссен пӗр писателӗ пит лайӑх ҫырса кӑтартнӑ.

„Вӑрмансенчи станцисен ҫӗнӗ ҫурчӗсенче мӗскӗн ҫутӑсем мӗлтлетеҫҫӗ.

Ҫав хысна ҫурчӗсенчен икӗ утӑмра—пачах та урӑхла тӗнче пуҫланать. Унта тӗттӗм те кичем вӑрманти халӑ-

хӑн вӑрмансем хушшинче ҫухалса кайнӑ сайра поселкисем хуран курӑнса лараҫҫӗ... Платформӑсем ҫинче ҫав ялсенчен пынӑ ҫынсем—ҫӗтӗк-ҫатӑк тумлӑ, арпашса кайнӑ ҫӳҫ-пуҫлӑ ыйткалакансем тӑраҫҫӗ. Вӗсем ҫав тери йӑваш, куҫӗсем ачасенни пекех лӑпкӑ. Пуҫӗсене усса, вӗсем хӑйсем валли пассажир тупӑнасса ним шанмасӑр тенӗ пекех кӗтеҫҫӗ, мӗншӗн тесен вӗсене темиҫе ҫын пуҫне те сайра-хутра ҫеҫ пӗр пассажир тивет. Ҫавӑнпа та, поезд ҫине ним тӗлсӗр пӑхса, вӗсем ӑна ҫапла каланӑн туйӑнать:

—Мӗн тӑвас тетӗр—ҫавна тӑвӑр, пирӗн ниҫталла каймалли те ҫук. Унтан кайран мӗн пулассине пӗлместпӗр эпир...

Эпӗ ҫак асапланса ҫитнӗ халӑх ҫине пӑхатӑп... Российӑн аслӑ пушхирне вӑрӑм, ним сас-чӗвӗсӗр каҫ шуса анать..."

Ҫак картинӑна писатель ун чухнехи Шӑхран станцийӗ ҫине пӑхса ӳкерсе панӑ пекех туйӑнать пире. „Российӑн аслӑ пушхирӗнче вӑрӑм, ним сас-чӗвсӗр каҫ" пулнӑ чухне пур станцисенче те—вӑл шутрах Шӑхранта та—ҫавӑн пек пулнӑ ҫав.

—Мӗн тӑвас тетӗр—ҫавна тӑвӑр, пирӗн ниҫталла каймалли те ҫук...—тенӗ пӗрисем, пурнӑҫ вӗҫне ҫитсе тухнисем, юлашки выльӑх-чӗрлӗхне, ҫӗрне сутса аякка ӗҫ шырама каякансем. Теприсем—пуянсем, усламҫӑ таврашӗсем—кунпа питӗ ӑста усӑ курнӑ, чухӑнсен куҫҫулӗпе тарӗнчен ылттӑн купи тума пӗлнӗ...

Вӑхӑт шунӑ. Ҫул хыҫҫӑн ҫул. Шӑхран станцийӗ ҫумӗнчи поселок ерипе пысӑклансах пынӑ. Унта, пурӑнмалли ҫуртсемпе купецсен конторисемсӗр пуҫне, чылай лапкасем пулнӑ. Хупахсем уҫнӑ. Анчах халӑх йышӗ 500—600 ҫынна ҫитнӗ пулин те, кашни килтех ачасем пулнӑ пулин те, шкул уҫасси ҫинчен никам та шутламан, ун вырӑнне пуянсем пӗрле пухӑнса... самаях пысӑк чиркӳ туса лартнӑ. Чылайран тин, 1910—1911 ҫулсенче, чиркӳ хурал пӳртӗнче церковно-приходски шкул уҫнӑҫи тунӑ. Халӑх сывлӑхне сыхласси те никама та интереслемен: станцире те, поселокра та фельдшер пекки те пулман хуть! Чирлисен ҫавӑн пирки Ҫӗрпӳри земски больницӑна, 54 ҫухрӑма, ҫӳреме тӳр килнӗ. Анчах ҫавӑн пек инҫете кам кайса ҫӳреме пултарнӑ-ха? Паллах, купецсемпе вӑрман промышленникӗсем патӗнче ӗҫлекен тарҫӑсем мар ӗнтӗ, хуҫасем хӑйсем кӑна! Чухӑн халӑх тӗрлӗ чир-чӗрпе асап курни те, вӑл чире пула ӗҫлейми

пулни те унти хуҫасене тивмен: паян пӗри чирлесе вилчӗ пулсан, ыран ун выранне тепри пырса тӑрать,—сахал пулнӑ-им ун чух пӗр чӗлӗ ҫӑкӑршӑн яра кунах ӗҫлеме хатӗррисем!..

Таврари вӑрмана касса сайратсах пынӑ, анчах чухӑн халӑх сӗм вӑрманти пекех пурӑннӑ. Асап та, мӑшкӑл та, хӗнхур та тӳснӗ вӑл, ҫапах та—чӑтнӑ.

— Пирӗн ниҫталла каймалли те ҫук...

Самани ҫавӑн пек пулнӑ ҫав.

## 2. Октябрь тӑвӑлӗ хыҫҫӑн

Станци пысӑклансах пынӑ, терӗмӗр эпир, ҫапах та вӑл питӗ вӑраххӑн ӳснӗ, мӗншӗн тесен ӑна ӳсме условисем пулман. Пӑспа ӗҫлекен икӗ армана тата чӑнта ҫапакан мастерскойсене шутламасан, кунта нимӗнле промышленность та пулман, анчах унсӑрӑн нимӗнле хуласемпе ялсем те ӳсме пултараймаҫҫӗ.

Эпир Канашра нумайранпа пурӑнакансемпе, вӑл шутрах тава тивӗҫлӗ учитель Павел Егорович Егоровпа, калаҫрӑмӑр.

— Октябрьти революци тӗлне Шӑхран станцийӗпе поселкӗнче мӗн-мӗн пулнӑ?

— Тӗрӗссипе каласан—нимех те пулман,—терӗ вӑл пире.—Халӑх йышӗ ун чухне 800 ҫынтан иртмен. Чугун ҫул станцийӗ питӗ пӗчӗккӗччӗ, станци ҫумӗнче икӗ паровоз кӗртсе тӑратмалӑх депо кӑна пурччӗ. Культура енӗпе илсен,—учительсен семинари те пуҫламӗш шкул... Анчах вӗсенче вӗренекенсем питӗ сахалччӗ. Учительски семинари революциччен пӗр учитель те кӑларайман. Больница та революци хыҫҫӑн тин уҫӑлнӑ. Ну, лапкасем, хупахсем пулнӑ ӗнтӗ...

Октябрьти Аслӑ революци хыҫҫӑн тин Шӑхран станцийӗ вайлӑ ӳсӗм ҫулӗ ҫине тухнӑ.

Совет влаҫӗ Шӑхранпа Арзамас хушшинчи тӳрӗ чугун ҫула туса ҫитерчӗ. (Унччен Хусантан Мускава каякан поездсем кунтан Улатӑр еннелле пӑрӑнса, Арзамаса Рузаевка урлӑ тухнӑ). Ҫакна пула Шӑхран узловой станци пулса тӑнӑ, станцӑри малтанхи 3 йӗр (путь) ҫумне тата 1 йӗр хушнӑ. Станцӑра ӗҫлекенсен хисепӗ нумай йышланнӑ. Совет влаҫӗ—чӑн-чӑн халӑх влаҫӗ пулса,—малтанхи кунсенчен пуҫласах ӗҫҫыннисен пурнӑҫне лайӑхлатассишӗн, вӗсен культурлӑхне хӑпартассишӗн тӑрӑшма тытӑннӑ. Учительски семинарирен чӑваш шку-

лĕсене валли учительсем хатĕрлекен педагогика курсĕ туса хунă. 1919 çулта иккĕмĕш сыпăклă шкул, чугун çул çинче 4 класлă пуçламĕш шкул уçнă. 1921 çулта кунта пуçласа медпункт уçăлать, икĕ çултан вăл 20 койкăллă больница пулса тăрать.

1920 çулта, Чăваш Автономиллĕ облаçне туса хунă хыççăн, Шăхран станцине Канаш ят панă, 1925 çулта вара, Чăваш облаçĕнчен Автономиллĕ республика тусан, Канаш станцинчен Канаш хули тунă.

Канаш станцин—кайран хулан—пурнăçĕ çулран çул чĕрĕлсе пынă. Кунта пурăнакан халăх йышĕ те çултан çулах йышланма пуçланă. 1920 çулта Канашра 1578 çын пурăннă. 1923 çулта халăх хисепĕ 1670 çынна, 1926 çулта—2323 çынна çитнĕ. Революци умĕнхи вăхăтпа танаштарсан, халăх йышĕ 3 хут ӳснĕ.

Çак çулсенче кунта хулашăн та, таврари ялсемшĕн те питех те паллă вырăн йышăнса тăракан пысăк ĕç пулнă: Канашра, больница çумĕнче, 40 койкăллă куç лечебници ĕçлеме тытăннă. Пурте пĕлеççĕ—патша саманинче пурнăç йывăр пулнипе, больницăсем ытла та сайра та сахал пулнипе, чăваш халăхĕ хушшинче трахома чирĕ майсăр вăйлă сарăлнă. Унпа никам та кĕрешмен, çавăнпа та кашни килте тенĕ пекех суккăрсем пулнă. Совет влаçĕ çав ĕмĕрхи чирпе, чăваш халăхĕн çав тери хăрушла инкекĕпе кĕрешме нимĕн те хĕрхенсе тăман. Вăл трахомăна пĕтерсе пыракан учрежденисем çултан çул, йышлăран йышлă уçма тытăннă. Канашри лечебница çавсенчен пĕри пулнă. Нумай пин çынсен куçĕсене сыватнă вăл.

Чĕрере́нех тав тунă уншăн чăваш ĕççыннисем хамăрăн юратнă совет влаçне, креслă партие. Ахальрен мар чăваш халăхĕ Сталин юлташ патне янă çырура çапла çырнăччĕ:

„Иртсе кайрĕ хуйхăм-суйхăм.
Сталин уçрĕ ман куçа,
Сталин уçрĕ тăн-пуçа,
Эп ик хут куракан пултăм“...

### 3. Хăватлă ӳсĕм çулĕсем

Революци хыççăн вунă çул иртсен, 1927 çулта, Канаш хули район центрĕ пулса тăрать. Çакăнтан вара хула пĕр чарăнмасăр, татти-сыпписĕр ӳсме, аталанма пуçлать.

Сталинла пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче вара вăл тĕпренех улшăнса, çĕнелсе, ĕлĕкхипе танаштарсан, лачах та палламалла мар хула пулса тăрать. Вуншар предприятисем, темĕн чухлĕ çĕнĕрен çĕнĕ, пĕринчен тепри чаплă çуртсем ÿссе ларнă Канашра çав аслă стройка çулĕсенче.

Акă вĕсенчен хăшпĕрисем.

Пилĕкçуллăхсем пуçланиччен Канашра промышленность пулманпа пĕрех. Паянхи кун хулара 21 предприяти ĕçлет: арман комбиначĕ, аш-какай комбиначĕ, машинно-тракторнăй станци, типографи, „Индпошив" мастерскойĕ, апат-çимĕç комбиначĕпе промкомбинат, „Красный воин", „Авангард", „Швейник" промысла артелĕсем т. ыт. те.

Комбинатсемпе артельсем халăха куллен кирлĕ япаласем туса кăлараççĕ: тумтир, кĕпе-йĕм çĕлеççĕ, сĕтел-пукансем, дивансем, шкулсем валли партăсем тăваççĕ, çăматă йăвалаççĕ, тир-сăран туса атă-пушмак çĕлеççĕ, „Швейник" артель тата тĕлĕнмелле илемлĕ тĕрĕсем тăвать...

Ĕлĕк çаксем пĕртте пулман.

Пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче Канашра коммунальнăй хуçалăх пулса тăнă. 1929 çулта—пĕрремĕш пилĕкçуллăх пуçламĕшĕнче—хулара электростанци тунă. Тепĕр çулхине теплоэлектроцентраль туса çитерсе хута янă. Икĕ мунча туса лартнă,—вĕсенче халь кашни сехетре çĕршер çын çăвăнса тухма пултарать. Пурăнмалли коммунальнăй çуртсен фондне паян кун тĕлне 43.913 тăваткăл метра çитернĕ. Водопровод тунă, — унăн тăршшĕ пĕтĕмпе 29 километра çитет. Çăкăр завочĕ, 2 пекарня тунă, çĕнĕ магазинсем,ларексем, столовăйсем уçнă.

Пĕр çирĕм çул каялла çаксенчен нихăшĕ те пулман.

Культура тĕлĕшпе тунă ÿсĕмсем татах та пысăк кунта.

...Шăхран поселокĕ пуçланса кайнă чух ку таврари чăвашсем хушшинче хут пĕлекен çын тупма та май пулман. Пире çакăн пек истори каласа пачĕç: Пикшикре алă пусма пултаракан Куçма Петĕрĕ ятлă пĕртен-пĕр чăваш пулнă, тет. Вара чăвашсен мĕнле те пулин ĕçлĕ хут тунă чух алă пусмалла пулсан—тÿрех лаша кÿлсе çав Петĕре илме янă. Лешĕ мăнкăмăлланнă, хуçкаланнă, пулштух ĕçтерсе тата „на чай" парсан тин пыма килĕшнĕ. Нумайăшне тархаслаттарса, тарăхтарса пĕтернĕ вăл, анчах ним тума та май килмен—нуша ун патнех илсе пынă, мĕншĕн тесен алă пусас енчен лешĕ „монополист" пулнă, урăх никам та пултарайман вăл ĕçе тума.

Кам та пулин юри шухăшласа кăларнă юптару пекех туйăнать ку пире. Анчах та чăнах пулнă вăл патша вăхăтĕнче. Тĕлĕнсе каймалла вĕт: пĕтĕм тавралăхра алă пусма пултаракан пĕр çын кăна пулнă!..

Паянхи Канашра 13 тĕрлĕ тĕслĕ шкул: педагогика училищи, финанс техникумĕ, фельдшерсем хатĕрлекен шкул, 5 вăтам шкул, рабочи çамрăксен каçхи шкулĕсем, чугун çул училищи, ФЗО-сем... Вĕсенче пурĕ 5 пин çын таран вĕренеççĕ. Вăл çамрăксене вĕрентекенсем—учительсем—200 çын ытла! Хăшĕсем кунта 20—25 çулшар ĕçлеççĕ ĕнтĕ. Нумай çамрăксене вĕрентсе аслă çул çине кăларнă вĕсем. Канаш çыннисем уйрăмах РСФСР тава тивĕçлĕ учительници Ермошкина, ЧАССР тава тивĕçлĕ учителĕсем Егоровпа Ронгинский юлташсем çинчен пысăк хисеппе калаçаççĕ.

Çак пур шкулсенчен чи „ватти"—педагогика училищи. Малтанах вăл педкурс пулнă, 1922 çулта педтехникум пулса тăнă. Халăха вĕрентес ĕç валли кирлĕ кадрсем ăнăçлăн хатĕрлевĕшĕн ăна ВЦИК президиумĕ уйрăм постановлени йышăнса вырăссен чаплă критикĕн Н. А. Добролюбовăн ятне панă.

1936 çулта педтехникумран педучилище тунă.

Октябрьти революци пулнăранпа, 30 çул хушшинче, Канашри педучилище Тăван çĕршыва 1026 учитель тата шкул çулне çитмен ачасемпе ĕçлеме 1586 воспитатель хатĕрлесе кăларнă. Педучилищĕрен вĕренсе тухнă çынсенчен нумайăшĕ халь республикăри ертсе пыракан ответлă вырăнсенче ĕçлеççĕ, хăшпĕрисем наука çулĕпе кайса пысăк ӳсĕмсем тунă. Икĕ çын профессор пулса тăнă. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче чапа тухнă пирĕн земляк, Совет Союзĕн Геройĕ генерал-майор Антон Петрович Петров та пĕр вăхăт Канаш педтехникумĕнче вĕреннĕ. Кунта вĕреннисенчен хăшĕсем тата аслă шкулсенче вĕренсе тухса таврăннă та çак училищĕрех преподавательсем пулса ĕçлеççĕ. Хальхи вăхăтра педучилищĕн 12 класĕнче 319 çамрăк вĕренет.

Пирĕн аталансах пыракан халăх хуçалăхне финанс, учет тĕлĕшпе ĕçлекенсем питĕ нумай кирлĕ. Çавăн пек специалистсене Канашри финанс техникумĕ хатĕрлет. 1934 çултан пуçласа кунтан 738 бухгалтерпа бюджет инспекторĕсем вĕренсе тухса, финанс системине ĕçлеме кайнă. Халь тата 228 çын вĕренеççĕ-ха, вĕсем те çитес çулсенче лайăх квалификациллĕ специалистсем пулса

тухаççĕ ĕнтĕ. Вĕренсе тухнисем выранне çĕннисем пырса кĕреççĕ.

Фельдшерски шкул халăх сывлăхне сыхлас ĕç валли вăтам медперсонал хатĕрлет. Халĕ 157 çамрăк вĕренет унта.

Рабочи çамрăксен шкулĕсем—пирĕн çĕршыври халăха вĕрентес ĕçре уйрăмах паха япала. Кунта тĕрлĕ сăлтавсемпе ача чухне вĕренеймесĕр юлнă çамрăк рабочисене производствăран уйăрмасăр, ĕç хыççăн, каçхине вĕрентеççĕ. Ку ĕнтĕ пирĕн партипе совет влаçĕ ĕççыннисен пĕлĕвĕсене, вĕсен культурлăхне пур майсемпе те хăпартса пыма тăрăшнине тата тепĕр хут кăтартса парать. Çавăн пек шкулсем Канашра иккĕ, вĕсенче 250 çамрăк рабочи вĕренет.

Анчах хулан культурăллă пурнăçне унта миçе шкул пулнине шута илнипе кăна хаклама çук. Шкулсем—ӳсекен ăру валли, унта пирĕн çамрăксене большевикла воспитани парса, хамăрăн аслă Тăван çĕршывăн ăнланулла гражданĕсем, коммунистла обществăн активлă строителĕсем пулма хатĕрлеççĕ. Пĕтĕм халăх валли ытти тĕрлĕ культурăллă учрежденисем кирлĕ: кино, клубсем, радио т. ыт. те.

Ку тĕлĕшрен те Канаш чухăн мар.

Сталинла пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче кунта культурăпа çутĕç учрежденисем пайтах уçнă. Революциччен, икĕ шкулсăр пуçне, нимĕнле культурăллă учрежденисем те пулман çĕрте халĕ кинотеатр ĕçлет, 2 клуб тунă,—вĕсенче иккĕшĕнче те сасăллă кино-установкăсем пур. 1922 çултах радиоузел ĕçлеме пуçланă. Малтанах вăл вăйсăр пулнă, анчах халь ĕнтĕ пĕр узел вырăнне иккĕ тунă, вĕсем 2,5 пин радиоточкăна калаçтараççĕ. Хулипе—19 библиотека, вĕсенче — 62 пин кĕнеке. Кунсăр пуçне, хулари тĕрлĕ учрежденисемпе организацисенче 18 хĕрлĕ кĕтес пур, вĕсем чăннипех те халăх хушшинче культурăллă ĕçĕн вучахĕсем пулса тăраççĕ...

Канашра халь виçĕ хаçат тухса тăрать.

Ытти çĕрти пекех, кунта художествăллă пултарулăх вăйлăн аталанса пырать. Кашни клубрах, кашни хĕрлĕ кĕтесрех—музыка кружокĕсем, хорсем, драмкружоксем. Пĕтĕм хулипе художествăллă пултарулăх коллективĕсем 40 таран шутланаççĕ, вĕсем 900 çын ытла пĕрлештерсе тăраççĕ.

Юлашки вăхăтра Канашра тата ача-пăча учрежденийĕсем çултан çул ӳссе пынă. Хулара халь ача сачĕсем 6,

вӗсенче 300 ачана кирлӗ пек пӑхса ӳстереҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне, ҫуллахи уйӑхсенче ача площадкисемпе пионер лагерӗсенче ҫулсеренех 1000 ача таран пулса сывлӑхӗсене ҫирӗплетеҫҫӗ.

Малтанах каласа хӑвартӑмӑр: Октябрьти революциччен Канашра чирлӗ ҫынсене пирвайхи, чи кирлӗ пулӑшу паракан медпункт та пулин пулман. Халӑх сывлӑхне сыхлассишӗн никам та тӑрӑшман. Совет влаҫӗ вӑхӑтӗнче Канашра икӗ больница тунӑ (вӗсенче 245 койка), виҫӗ рентген установки лартнӑ, виҫӗ поликлиника, виҫӗ медпункт, хӗрарӑмсен консультацийӗсем иккӗ, ачасен сывлӑхне тӗрӗслесе тӑракан консультацисем иккӗ, ача ҫуратмалли ҫуртсем иккӗ, сасартӑк чирлесе ӳкнисене васкавлӑн пулӑшмалли пункт, темиҫе аптека уҫнӑ. Халӑх сывлӑхне сыхлас ӗҫ валли государство укҫа-тенкӗ ҫултан-ҫул ытларах парса пырать. 1945 ҫулта ку ӗҫ валли Канаша 1 миллион та 861 пин тенкӗ панӑ пулсан, 1947 ҫулта— 2 миллион та 807 пин тенкӗ панӑ. Килес ҫул вӑл цифра татах та пысӑкланать...

Канашра халь пур йышши чирсемпе кӗрешме те пысӑк квалификациллӗ специалистсем пур. Пӗтӗмпе унта 52 врач тата 175 ҫын вӑтам медперсонал ӗҫлет. Вӗсенчен 12 врач тата 141 ҫын вӑтам медперсонал— совет влаҫӗ вӑхӑтӗнче вӗренсе тухнӑ чӑваш халӑхӗн ывӑлӗсемпе хӗрӗсем. Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче халӑх сывлӑхне сыхлас, чирлисене тата ҫапӑҫусенче аманнӑ воинсене сыватас тӗлӗшпе ырми-канми ӗҫленӗшӗн правительство 80 медицина работникӗсене Совет Союзӗн орденӗсемпе медалӗсем парса наградӑланӑ. Хула ҫыннисемпе таврари ялсенчи колхозниксем, хӑйсен сывлӑхӗшӗн чӗререн тӑрӑшса яланах паха пулӑшу парса тӑнӑшӑн уйрӑмах И. П. Лундина, М. П. Фролова, Л. А. Минеева, Солодкова врачсене, В. Алексеева, М. Михайлова, А. Андреева, А. Петрова фельдшерсемпе медсестрасене чӗререн тав тӑваҫҫӗ.

Тата тепӗр питех те паха япалана палӑртса хӑвармалла. Совет влаҫӗ нумай ача пӑхса ӳстерекен амӑшӗсене пысӑк хисепе хурса, вӗсене кирлӗ таран пулӑшу парса тӑрать. 1944 ҫулхи июлӗн 8-мӗшӗнче СССР Верховнӑй Совет Президиумӗ кӑларнӑ указ тӑрӑх Канаш хулинче 4 хӗрарӑма „Амӑшӗ-героиня“ орденӗпе, 355 хӗрарӑма ытти орденсемпе тата медальсемпе наградӑланӑ. Виҫӗ ҫул хушшинче нумай ачаллӑ амӑшӗсене 1 миллион та 651 пин тенкӗ пособи парса пулӑшнӑ.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче Канаш хулинчи ĕçсыннисем, пĕтĕм Совет Союзĕнчи халăхпа пĕрле, ирсĕр тăшмана — нимĕç захватчикĕсене аркатса тăкассишĕн ырми-канми ĕçленĕ, фронта пур вăйран пулăшса тăнă. Канашри промышленность предприятийĕсем вăрçă çулĕсенче фронт тата тыл валли пĕтĕмпе 250 миллион тенкĕлĕх тĕрлĕ продукци туса кăларнă. Совет правительстви çакăншăн Канашри 17 çынна Совет Союзĕн орденĕсем панă тата 4500 çынна—рабочисене, инженерсемпе техниксене тата служащисене „1941—1945 çулсенчи Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче хастарлă ĕçленĕшĕн" медальпе наградăланă. Калама та çук пысăк чыс ку!

Фронтсенче пулнă Канаш çыннисем, Тăван çĕршывшăн паттăррăн çапăçса, нумайăшĕ тĕрлĕрен наградăсем илнĕ. Тăватă çынна Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă.

## 4. Тăватă çул юппи

Вунă çул ĕлĕкрех, 1938 çулта, Канашпа Шупашкар хушшинчи чугун çул ĕçе кĕнĕ. Çавăнтан вара Канаш станцийĕ Хусан çулĕ çинчи питех те пысăк узел пулса тăрать. Поездсем кунтан тăватă еннелле—Арзамас урлă Мускава, тепĕр еннелле—Хусана, Улатăр витĕр Рузаевкăна каяççĕ, Канашран Шупашкара та кашни кунах поездсем çӳреççĕ...

Çавăн пек пысăк узел пулса тăнă май, грузсем турттарасси çуллен ӳссе пынă пирки, Канаш станцин чугун çул хуçалăхĕ çулленех аталанса, пысăкланса пырать.

1926 çулччен станцире поездсене йышăнмалли 4 йĕр (путь) çеç пулнă. Тĕрлĕ грузсемпе таварсене хума—пĕртен-пĕр пакгауз ĕçленĕ. Ку вăл çав тери çителĕксĕр пулнă. Çавăнпа та 1927 çулта кунта пысăк тавар станци—II-мĕш Канаш туса ĕçе янă, поездсене йышăнма унта 11 йĕр тунă. Анчах паровозсене ремонтлама 2 паровоз кăна кĕрсе тăма пултаракан кивĕ депо çеç пулнă-ха. Станци ĕçĕнче ку питĕ пысăк чăрмав пулса тăнă. Çавăн пирки II-мĕш Канашраваскасах çĕнĕ пысăк депо тунă. Малтанхи депори оборудовани питĕ начар пулнă, унта пур ĕçсене те алăпа тума тӳр килнĕ, анчах çĕннине механически мастерскойсемпе, çĕнĕ йышши паха станоксемпе хĕçпăшаллантарнă, çапла вара паровозсене ремонтласси темиçе хут хăвăртрах тата авантарах пулса пынă.

Канашпа Шупашкар хушшинчи çула туса çитерсен, І-мĕш Канаш станцинче татах 2 йĕр хушнă. Юлашки çулсенче каллех темиçе йĕр тунă.

Станци ытти енчен те пысăкланса, техникăпа пуянланса, хăйĕн ĕçне пĕрмай лайăхлатса пынă. Ĕлĕкрех паровозсем топливăна алăпа туртса ĕçлеттерекен кранпа—„тăрнапа“ илнĕ, халĕ топливо валли çĕнĕ склад туса лартнă. Кăмрăка халĕ механизациленĕ майсемпе—грейфернăй крансемпе, эстакадăпа парса тăраççĕ.

Пилĕкçуллăхсем хушшинче çул çинчи дистанци мастерскойĕсем те тĕпренех улшăннă. Ĕлĕкхипе танаштарсан, мастерскойсем туса кăларакан пĕтĕм продукци хисепĕ вунă хут ӳснĕ.

Станцире ĕçлекенсем ӳссех пынипе, кунта вĕсене валли пурăнмалли çуртсем нумай туса лартнă. 1928-мĕш çулччен лини тăрăх тăватă хваттерлĕ, пĕр хутлă 8 çурт тунă, 1932 çул хыççăн II-мĕш Канашра икĕ хутлă 5 пысăк çурт лартнă. II-мĕш Канаш халь хăйне майлă пĕчĕк хула пек курăнать.

Узел пысăкланса, пĕрмай аталанса пынипе пĕрлех, кунта çынсем—путеецсен, паровозниксен, движенецсен квалификациллĕ кадрĕсем ӳснĕ. Революциччен чугун çул çинче чăвашсем сахал ĕçленĕ, анчах халь вĕсем çĕршерĕн те пиншерĕн шутланаççĕ. Вĕсем ĕнтĕ чи кăткăс ĕççене вĕренсе çитнĕ, хăшĕсем пĕтĕм Хусанпа Мускав хушшинчи чугун çул çинче паллă çынсем пулса тăнă.

Ку тĕлĕшрен станцире нумайранпа ĕçлекен паровоз машинисчĕн, СССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Павел Назарович Назаровăн кунçулĕ питех те кăтартуллă.

...Павел Назарович Канаш çывăхĕнчи Мăрсаван-кассинчи питех те чухăн хресчен çемьинче çуралса ӳснĕ.

— Аттен ачи-пăчи нумай пулнипе, çĕрĕ пĕр ят анчах пулнипе, эпир нихăçан та тăраниччен çăкăр çиеймен,—тесе каласа парать вăл.—Ялан выçлă-тутлă пурăннă...

Ялти шкулта вĕренсе тухнă хыççăн пĕчĕк Павлуш малалла вĕренме каясшăн пулнă, анчах, çук пурнăçа пула, вăл ĕмĕт пурнăçланайман. Çемьере „харампыр“ пулас мар тесе, 15 çулхи Павлуш 1928 çулти хĕлле Канаш станцине ĕçлеме кайнă. Анчах унта вăл... юр хырса çеç пурăннă, мĕншĕн тесен чугун çул çинчи хуть епле ĕçе тума та малтан вĕренес, хăнăхас пулать, анчах унăн халлĕхе нимĕнле хăнăху та пулман-ха. Юр хырса пурăннă вăхăтра, çынсем паровозсем çӳретнине сăнаса, Павлуш çирĕп шут тытнă:

— Епле пулсан та, чугун çул çине пӗр-пӗр çӗре ӗçлеме кӗретӗп те—вӗренетӗп! Пурӗпӗр машинист пулатӑп!

Тепӗр çулхине вара вӑл станцине штатлӑ вырӑна—водолиза пырса кӗнӗ. Çав хушӑрах кочегар ӗçне вӗренме тытӑннӑ. Кайран икӗ çул хушши кочегар пулса ӗçленӗ те, машинист помощникӗ пулма экзамен тытнӑ.

Ӗнтӗ унӑн ӗмӗчӗ тулма пуçланӑ. Вӑл калама та çук тӑрӑшса ӗçленӗ. Лайӑх ӗçленӗшӗн ӑна вунӑ-вуникӗ хут тӗрлӗ япаласем, укçа парса премиленӗ, приказсенче тав тунӑ. 1938 çулта Назаров юлташа Мурома, паровоз машинисчӗсене хатӗрлекен 6 уйӑхлӑх курса янӑ. Унтан вӑл „отлично" паллӑпа вӗренсе тухнӑ та çавӑнтанпах машинист пулса ӗçлет.

Назаров юлташ хальхи вӑхӑтра—Канаш станцинчи чи малта пыракан, чи ӑста машинист. Унӑн паровозӗ яланах хуть те ӑçта та тухса кайма хатӗр. Вунӑ çул хушшинче унӑн пӗр авари те пулман. Вӑл кашни уйӑхрах паровозӑн куллен чупмалли вӑтам нормӑна 60—65 километр ытла тултарать. Чугун çул çинчи топливӑна перекетлес тӗлӗшпе тунӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса, вӑл 1947 çулхи августпа октябрь уйӑхӗ хушшинче 55 тонна топливо перекетленӗ. Хӗл сывхарнӑ май, вӑл пуринчен малтан хайӗн паровозӗ хӗлле ӗçлеме хатӗррине палӑртакан социализмла паспорт илнӗ.

Назаров юлташ—лайӑх машинист кӑна мар. Вӑл—активлӑ общественник. Вӑл ӗнтӗ пӗр вунӑ çул хушши Канаш райсовечӗн депутачӗ пулса тӑрать, ӗççыннисен пурнӑçне лайӑхлатассишӗн тӑрӑшса ӗçлет.

1940 çулта Павел Назарович Назарова коммунистсен партине илнӗ. 1945 çулта тяга техник-лейтенанчӗн званине панӑ. 1946 çулта халӑх ӑна СССР Верховнӑй Совечӗн депутатне суйланӑ.

Ӑçта, хӑш çӗршывра пулма пултарать çакӑн пекки? Çук, ниçта та пулма пултараймасть. Пирӗн Совет Союзӗнче кӑна, тӗнчери чи демократиллӗ çӗршывра çеç кашни ӗççынни—хресчен е рабочи—çав тери ӳсме, правительство çынни пулма пултарать...

Канаш станцинче совет влаçӗ вӑхӑтӗнче ӳснӗ, лайӑх ӗçлекен машинистсем татах та пур. Акӑ машинист-орденоносец Николаев юлташах илер. Вӑл хуть те хӑçан та пур измерительсене те ирттерсе тултарса пырать. Хайӗн паровозӗ хӗллене хатӗррине палӑртакан социализмла паспорта Назаров юлташ хыççӑнах илнӗ. Терюкалов,

Соловьев, Тюполов, Алексеев т. ыт. машинистсем тӗ ялан паха тӗслӗхсем кӑтартаççӗ.

Канаш станцинчи маневровӑй диспетчер Андреев юлташ 1947 çул тӑршшипех социализмлӑ ӑмӑртура пӗрремӗш вырӑн йышӑнса тӑрать. Вӑл ӗнтӗ поездсене йӗркелесе ӑсатмалли çулталӑк планне халех 112 процент тултарнӑ. Кӗçӗн стрелочник Порфирьев юлташ çула план тӑрӑх юсассине октябрен 20-мӗшӗ тӗлнех туса çитернӗ. Çул дистанцийӗн производствӑллӑ мастерскойӗнче ӗçлекен тимӗрçӗ Калинкин юлташ, Октябрьти революци 30 çул тултарнӑ ятпа стахановла вахтӑна тӑрса, хӑйӗн планне кулленех 300 процент ытла тултарса пынӑ.

Кун пек тӗслӗхсем тата нумай илсе кӑтартма пулать.

Чӗререн тӑрӑшса, стахановла ӗçлесе пырса, Канаш станцийӗн коллективӗ хӑйсен станцине Хусан çулӗ çинчи узловой станцисем хушшинче пӗрремӗш вырӑна кӑларнӑ. Вӗсем халӗ дорпрофсожӑн тата çул Управленийӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавне тытса тӑраççӗ.

## 5. „Канашра юсанӑ...“

...Канашра чӑвашӑн халӗ<br>
Хурçӑ шавлӑ çул çинче<br>
Вагонсем юсакан савӑт<br>
Çӗн хула пек çитӗнчӗ.<br>
(*Чӑваш халӑхӗ аслӑ Сталин патне янӑ çыру*)

Кайӑр эсир Мурманска е Одессӑна, Эстоние е Казахстана, Кишинева е Самарканда—пур çӗрте те, пур çулсем çинче те „**Кап. ремонт Канаш ВРЗ**“ тесе çырнӑ пысӑк кӗрлӗ вагонсене тӗлпулма пултаратӑр.

Ку ӗнтӗ çав вагонсене пирӗн Канашри заводра тӗппрен юсаса кӑларса янине пӗлтерет.

Канашри вагонсем юсакан завод—Чӑваш республикинчи чи пысӑк индустриллӗ предприятисенчен пӗри. Кунпа пӗрлех вӑл—СССР Çулйӗр министерствин вагонсем юсакан завочӗсем хушшинче те чи пысӑкки. Пӗтӗм Союзӗпе ун пек заводсем нумай, анчах Канашри завода çитекенни пӗрре те çук.

Завочӗ вӑл çамрӑк-ха. Ӑна сталинла иккӗмӗш пилӗкçуллӑхра туса лартнӑ, кӑçалхи август уйӑхӗнче çеç вӑл вуникӗ çул тултарчӗ. Анчах çак кӗске вӑхӑтрах завод хамӑрӑн çӗршыври чугун çулсем валли вуншар пин вагонсем тӗпрен юсаса кӑларнӑ.

...1934 çул пуçламĕшĕнче ку выранта нимĕн те, пĕр кирпĕч те, пĕр пĕрене татки те пулман. Кунта, пушхирте, армути кашласа ларнă. Апрель уйăхĕн малтанхи кунĕсенче, шыв-шур типсе çитичченех, çав пушă выранта чус хăмасенчен çапкаласа лаç пек барак туса лартнă. Кĕçех унта 400 çын таран çĕр чавакансем, плотниксем илсе пынă. Большевиксем кунта пысăк завод тума тытăннă...

Чи малтан пулас заводри рабочисем валли пурăнмалли çуртсем тунă. Строительствăра ĕçлекенсен хисепĕ кунран кун ÿснĕ, август тĕлнелле вĕсен хисепĕ виçĕ пин çынран иртнĕ. Пурăнмалли çуртйĕрсемпе пĕрлех завод корпусĕсем, çĕр айĕнчен сасартăк сиксе тухнă пек, ÿсме тытăннă.

Астăватăп эпĕ, 1934 çулхи октябрь уйăхĕнче пулнăччĕ унта. Ун чухне рабочисем пурăнмалли 10—15 икĕ хутлă çуртсене туса пĕтернĕччĕ ĕнтĕ, вĕсенче пурăнма та пуçланăччĕ, заводăн тĕп корпусĕ те хатĕрччĕ, шалта монтаж тăватчĕç.

Юмахри пек хăвăртлăхсем! Большевиксем çеç ĕçлеме пултараççĕ унашкал хăвăртлăхсемпе, мĕншĕн тесен вĕсем çĕнтереймен йывăрлăхсем çук...

Йывăрлăхсем чăнах та çав тери пысăк пулнă.

Строительство валли рабочисем çитмен. Малтанах вĕсене ниçта усрама та пулман. Уй варринче туса лартнă пĕчĕк баракра контора та, кухня та, тем те пулнă; унта пурăнма май килмен, тата вăл ун чухлĕ халăха шăнăçтарма та пултарайман. Рабочисем çĕр вырта таврари ялсене çÿренĕ, ку ĕçлес вăхăта сая ярнă.

Завод тунă çĕре материалсем илсе пыма малтанах чугун çул пулман, вĕсене машинăсемпе, лашасемпе турттарма тивнĕ. Ĕçе ку калама та çук вăрахлатнă. Çапах та стройка пĕр самантлăха та чарăнса тăман, пулас завод çитĕннĕçемĕн çитĕннĕ...

Строительсем хушшинче социализмлă ăмăрту сарăлса кайнă. Бригадăпа бригада, çынпа çын ăмăртса, чунтан тăрăшса, вăя хĕрхенмесĕр ĕçленĕ. Ăмăртура яланах коммунистсемпе комсомолецсем малта пынă. Вĕсем ĕçре чи паха тĕслĕхсем кăтартнă. Пур халăх ывăлĕ-хĕрĕсем те тунă завода: вырăссем те, чăвашсем те, тутарсем те, украинецсем те, мăкшăсем те. Кашни хăйĕн чĕлхипе калаçнă, анчах вĕсен пурин те пĕр тĕл, пĕр ĕмĕт пулнă:

— Завода срокра ĕçе ярас!..

Чăн та, вĕсем хăйсен ĕмĕтне пурнăçланă. Завод ни-

кӗсне хывнӑ хыҫҫӑн вунпилӗк уйӑхран—1935 ҫулхи августӑн 25-мӗшӗнче—вӑл груз турттармалли пирвайхи вагонсене ремонта йышӑннӑ. Сентябрь уйӑхӗнче вара завод ҫӗршыва хӑйӗн продукцине пама тытӑннӑ.

Ҫавӑнтан вара завод пӗр чарӑнмасӑр ӗҫлет.

Пӗтӗмӗшпе ӑна—пур цехсене, теплоэлектроцентрале—1939 ҫулта туса ҫитернӗ.

Завод кӑларакан продукци хисепӗ ҫултан ҫулах ӳссе пынӑ. 1935 ҫулхипе танаштарсан, 1940 ҫулта завод вагонсем 41 хут ытларах юсаса кӑларнӑ. Пӗлтӗр завод коллективӗ вагонсем кӑларас тӗлӗшпе вӑрҫӑчченхи виҫене ҫитнӗ, анчах кӑҫалхи 9 уйӑх хушшинче 1946 ҫулта 12 уйӑх хушшинче туса кӑларнӑ пӗтӗм продукцирен нумай ытларах продукци панӑ.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ ҫулӗсенче завод коллективӗ, вагонсем юсаса кӑларнисӗр тата чугун ҫул валли запаслӑ пайсем туса тӑнисӗр пуҫне, фронт валли нумай ӗҫленӗ. Рабочисем, инженерсемпе техниксем вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче чӑннипех те паттӑрла ӗҫленӗ. Ҫавӑншӑн завода темиҫе хутчен те ВЦСПС-па Ҫулйӗр Халӑх комиссариачӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне панӑ, юлашкинчен ӑна ӗмӗрлӗхех заводра хӑвармӑлла тунӑ. Совет правительстви заводра ӗҫлекенсенчен 1121 ҫынна Совет Союзӗн орденӗсемпе медалӗсене панӑ, 174 ҫынна Ҫулйӗр министрӗ наградӑланӑ.

Заводри рабочисемпе служащисем вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче икӗ бронепоезд тумалӑх укҫа-тенкӗ пухнӑ, уншӑн завод коллективне Иосиф Виссарионович Сталин тав тунӑ.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑн—1946 ҫулта—Ҫулйӗр министрӗн приказӗ тӑрӑх завод пысӑк груз ҫӗклекен вагонсем ҫеҫ юсаса кӑларма тытӑннӑ, производствӑна поток меточӗ ҫине куҫарнӑ. Ҫав майпа заводри производствӑна нумай улӑштарма, тӗрлӗрен ҫӗнӗ механизмсем хатӗрлеме тӳр килнӗ. Ҫапах та, завод коллективӗ ку задачӑна ӑнӑҫлӑн пурнӑҫланӑ. Ҫӗнӗ техникӑна вӗренсе, социализмлӑ ӑмӑртӑва сарса пырса, вӑл кӑҫал вагонсем юсаса кӑларассине, чугун ҫулсем валли запаслӑ пайсем тӑвассине уйӑхран уйӑха ӳстерсе пынӑ, ҫав вӑхӑтрах, перекетлӗхшӗн кӗрешсе, 9 уйӑх хушшинче продукцин хӑйне ларакан хакне пӗлтӗрхинчен 26,5 процент чакарнӑ та, 2 миллион та 250 пин тенкӗ перекетленӗ.

Производствӑра пысӑк ӳсӗмсем туса пынӑшӑн, кӑҫалхи май уйӑхӗнчен пуҫласа, завода ВЦСПС-па Ҫулйӗр министерствин куҫса ҫӳрекен ялавне, август уйӑхӗнчен



239-1с
Чувашская Республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. Горького

пуçласа Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн куçса çӳрекен ялавне панă. Вăл ялавсене завод коллективĕ хăйĕн аллинче çирĕп тытса тăрать.

Октябрьти социализмла революци 30 çул тултарасси çывхарнă май заводра нихăçанхинчен те вăйлă производствăллă çĕкленӳ пуçланса кайнă. Çавна пула октябрь уйăхĕнче завод вагонсем юçаса кăларас плана 132 процент тултарнă. Кустăрма цехĕ октябрĕн 18-мĕшĕ тĕлне çулталăк планне пĕтĕмĕшпех тултарса çитернĕ. Уйрăм стахановецсем тата пысăкрах çитĕнӳсем тунă. Вагонсем пухакан цехри газорезчик Пузырев юлташ çулталăклăх задание 215 процент тултарнă, вагонçем хатĕрлекен цехри слесарьсем—Фадейчев, Николаев тата Быков çулталăк нормине икĕ хут ытларах тултарнă, тĕрлĕ цехсенче ĕçлекен стахановецсем—Подгорный, Гаврилов, Трофимов, Лашманов, Дементьев 2—3 çул нормине тултарнă, вагранщик Кургаев—5 çул нормине тултарса çитернĕ!

Октябрь уйăхĕнче пур цехсем те государство заданине ирттерсе пурнăçа кĕртнĕ. Чи пĕчĕк показатель—104,2 процент пулнă. Малта пыракан цехсем хăйсен планĕсене 160 процент таран тултарнă.

Çакă вăл заводра социализмлă ăмăрту вăйлăн сарăлса пынинчен, рабочисем хăйсен ăсталăхне куллен ӳстерсе пынинчен, ĕçре çĕнĕ, тухăçлăрах меслетсемпе усă курнинчен килнĕ.

Чыс та мухтав вĕсене!

Анчах ку таранччен тунă ӳсĕмсем—виçене çитнине пĕлтермеççĕ-ха. Татах та лайăхрах ĕçлеме, çĕршыва тата ытларах продукци туса пама пулать. Ăна валли пур условисем те пур. Завод коллективĕ ăна хăй те пĕлет. Халĕ, Ленинградри рабочисем çĕнĕ пилĕкçуллăх плана 4 çулта пурнăçлама чĕннине сӳтсе-явса, заводри стахановецсем—вĕсемпе пĕрле ытти пур рабочисем те—ăна чунтан ырласа йышăннă. Эпир Канашри завод коллективĕ те пилĕкçуллăх плана 4 çулта тултарасса шанатпăр!

...Çынсем кунта заводпа пĕрле çитĕнсе пынă.

Нумайăшĕ завода хăйсен аллисемпе тунă та паян кун та унтах ĕçлесе пурăнаççĕ. Вĕсем ĕнтĕ опытлă, квалификациллĕ ăстасем пулса çитнĕ.

Илес акă вагонсем пухакан цехри иккĕмĕш поток мастерне, коммунист Николай Степанович Степанова. Вăл—чăваш, завода малтанах килсе кĕнĕ. Унăн нимĕнле специальность та пулман. Вăл ахаль рабочи пулса ĕçленĕ. Анчах тăрăшса ĕçленипе, ĕçре вĕренсе пынипе, вăл пĕр-

май ӳссе пырса, мастер пулса тăнă. Халь вăл ҫăватă бригадăна ертсе пырать. Октябрь планне вĕсем срокчен тултарнă.

Е тата кустăрма цехĕн начальникне Дмитрий Порфирьевич Елисеева илес. Малтанах вăл токарь ҫеҫ пулнă. Унтан аслă мастера ҫитнĕ, смена начальникĕ пулнă, кустăрма цехĕн начальникĕн заместителĕ пулса ĕҫленĕ, юлашкинчен—цех начальникĕ. Унăн цехĕ—заводри чи малта пыракан цех.

М. К. Кисляков завод тунă ҫĕре 1934 ҫултах килнĕ. Столяр пулнă. Икĕ ҫултан ăна мастер ятне панă, 1938 ҫултанпа древообделочнăй цех начальникĕ пулса ĕҫлет.

В. Т. Темкин та завода 1934 ҫултах килнĕ. Слесарь пулса ĕҫленĕ. Кайран ăна мастер тунă. 1941 ҫулта вагонсем пухакан цехри комплекс начальникĕн ĕҫне туса пыма хушнă. Халĕ вăл—вагонсеве хатĕрлекен цех начальникĕн заместителĕ.

Г. А. Мазуров 1934 ҫулта техник-сметчик ҫеҫ пулнă. Халĕ—ремонтно-строительнăй цех начальникĕ.

Завод начальникĕ С. П. Трухин та ҫак заводра ҫитĕннĕ ҫын, темелле. Институтран вĕренсе тухса 1938 ҫулта завода килсенех, вăл кустăрма цехĕн начальникĕн заместителĕ ҫеҫ пулнă. Унтан вара—вагонсем пухакан цехăн начальникĕ, 1943 ҫулта—заводăн производство пайĕн заведующийĕ, 1944 ҫулта—заводăн главнăй инженерĕ, 1946 ҫулхи май уйăхĕнчен пуҫласа—завод начальникĕ.

Эпир кунта уйрăм тĕслĕхсене ҫеҫ илтĕмĕр. Ун пеккисем заводра питĕ нумай. Завод хăйне валли ҫак ҫулсем хушшинче производство командирĕсем 100 ҫын ытла ҫитĕнтернĕ. Вĕсем хушшинче чăвашсем те сахал мар.

Завод хăйне валли тăтăшах квалификациллĕ кадрсем хатĕрлесе пырать. Кунта 1941 ҫултанпах икĕ ҫул вĕренмелли чугун ҫул училищи тата 6 уйăх вĕренмелли ФЗО шкулĕ ĕҫлеҫҫĕ. Иртнĕ ултă ҫул хушшинче ҫав шкулсенчен 1500 ҫын таран вĕренсе тухнă. Вĕсем пурте тенĕ пекех заводра ĕҫлеме юлнă. Училищĕпе ФЗО ран вĕренсе тухнă ҫамрăксем нумайăшĕ халь пысăк квалификациллĕ рабочисем пулса тăнă, хăшĕсем нормăна 400 процент таран тултараҫҫĕ, уйăхне 2000 тенкĕ таран ĕҫлесе илеҫҫĕ.

...Вунвиҫĕ ҫул хушшинче Канашри вагонсем юсакан завод, чăваш халăхĕ хамăрăн аслă ҫулпуҫăмăр Сталин юлташ патне янă ҫырура каланă пек, „ҫĕн хула пек ҫитĕннĕ". Канаш хули хĕррине тухса кăнтăрпа хĕвелтухăҫ

еннелле пăхсан, вăл чăн та пысăк хула пекех курăнать. Шала пырса кĕрсен те çавăн пекех туйăнать...

Заводра халь 12 пин çын таран пурăнаççĕ. Унта темиçе шкул, больница, клуб, столовăйсем, ача яслисемпе сачĕсем ĕçлеççĕ, типографи пур, хаçат тухать. Çулсеренех çĕнĕрен çĕнĕ çуртсем купаланаççĕ. Заводпа юнашар социализмла хула—пит те пысăк, тăватă хутлă çуртсем ӳсеççĕ...

## 6. Ыран...

Çавăн пек паянхи Канаш хули.

Вунултă çул каялла çеç тухнă „Малая Советская Энциклопедия" словарĕн 3-мĕш томĕнче ку хула çинчен çапла çырнă:

«*Канаш—(б. Шихраны) гор. Чувашской АССР, 2,2 т. ж., ст. Москов. Каз. ж. д. В окрестностях—лесоразработки.*»

Мĕн тери кивелнĕ ку сведенисем!..

Паянхи Канаш—пысăк индустриллĕ, вуншар предприятиллĕ хула, унта вăтăр пин çын ытла ĕçлесе пурăнать. Вăл—промышленноçлă тата культурăллă центр, Хусанпа Мускав хушшинчи чугун çул çинчи питех те паллă узел. Вăл—пирĕн республикăн экономикăллă тата культурăллă хăватлă ӳсĕмĕн символĕ пек пулса тăрать.

Анчах малашне вăл татах аталанать-ха, тата пысăкрах, аслăрах, культурăллăрах хула пулать. Канашăн ыранхи кунĕ паянхинчен нумай илемлĕрех пулать.

Çĕнĕ пилĕкçуллăхра Канашра нумай çĕнĕ çуртсем ӳссе лармалла: 600 çын шăнăçмалăх социализмлă культура çуртĕ, 300 çынлăх кинотеатр, çĕнĕ вăтам шкул, ача сачĕ, гостиница, пурăнмалли çуртсем.

Çул çинче çĕнĕ пысăк вокзал пулать.

Вагонсем юсакан завод татах аслăланать. Унтах чугун çул училищи валли вĕренӳпе общежити корпусĕсем ӳссе лармалла.

Канаш тата пысăкрах, тата илемлĕрех, чăн-чăн социализмла хула пулать. Пулатех!